# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

57 (7588) № * *Шăмат кун, 2008 çулхи августăн (çурла) 2-мĕшĕ* * *Хакĕ ирĕклĕ*


**Вырма – 2008 маршручĕсемпе**



# Ĕç те, çын сывлăхĕ те малти вырăнта

Кăçал Муркаш Чăваш Республикин кунне хăйĕн патĕнче irttерчĕ. Ăнсăртран мар çакă. Муркашсем тивĕçлипе ĕçлеме те, савăк канма та, ĕç çыннин сывлăхĕ пирки шутлама та пĕлеççĕ. Сăмахпа мар, ĕçпе! Халĕ калани пĕрремĕш çул мар ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх кооперативĕнче анлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Камшăн епле пулĕ те, анчах пуян пурнăç опычĕллĕ Кронид Ефимович Сретинский хăйĕн ĕçченĕсен пурнăçĕпе сывлăхĕ, вĕсен малашлăхĕ пирки шутласа çĕннине тăтăш çул уçса пырать. Çакă паян хуçалăхра куллен вăй илсе пыракан вырмара та аван курăнать.

... Вăхăтра тата агротехнологие пăхăнса акнă тыр-пул Кашмашсемпе Çатракассисен кăçал та ăнса пулчĕ. Çакă кашни уйрах курăнать. Ăнчах пусăри вăл пӳлмери мар. Техникăран пуян машинăпа трактор паркĕнче ирлесех механизаторсем хăйсене шанса панă техникăна пăхса хаклама пуçларĕç. Акă Валерий Соловьевпа Виталий Степанов комбайнерсем хăйсене шанса панă ДОН-1500 «хир карапне» ĕçлеттерсе ячĕç. Ĕç çине кăçал та тĕплĕ хатĕрленчĕç те пысăк кăлтăк пулмалла марах. Ытти çул та районти вырмаçăсен ăмăртăвĕнче ырăпа палăрнă экипаж кăçал та хуçалăхри вырмана пĕрремĕш тухрĕ. Çакă ыттисемшĕн ăнăçу çулĕ пуласса шанчĕç вĕсемпе пĕрле ĕçлекенсем. Июлĕн 29-мĕшĕ. Каç пулттипе пĕрĕхсе кайнă çумăрччен маттур комбайнерсем тепĕр ДОН-1500 комбайнпа пĕрле 22 гектарлă кĕрхи тулă хирне вырса та пĕтерчĕç.

– Пĕрремĕш тухăç савăнтарать. Малалла та çапла пулсанччĕ. Вырмана çухатусемсĕр ирттерсен çитес хĕл кунĕсем хуçалăх ĕçченĕсемшĕн кашниншĕнех ăшă та тулăх пуласси пирки иккĕленӳ çук. Ĕç условийĕсемпе ĕç тӳлевĕ тивĕçтернĕрен вырман пĕрремĕш кунĕнченех хирте те, йĕтем çинче те ĕç кал-кал пуçланчĕ, – терĕ хиртен йĕтем çине çĕнĕ тырă леçсе парка таврăннă А. Степанов водитель. Саша паянхи вырмара пĕрремĕш бункера йĕтем çине кĕртрĕ. Ăнăçлă пултăрччĕ унăн алли!

«Свобода» хуçалăхăн ку вырмара ытти çĕрти пек мар çумран таса тыр-пула 1200 гектар çинчен пуçтарса кĕртмелле. Вăл шутра кĕрхисем – 356 гектар.

– Çынсем вырма ĕçĕ çине ответлă пăхса ĕçлессе шанатпăр. Çакна валли ĕç тата тӳлев условийĕсене тивĕçлипе пăхса хăварнă. Тĕпрен илсен, вырмана эпир çанă тавăрса хатĕрленнĕ, – терĕ кĕске калаçура хирте тĕл пулнă К. Сретинский. Сăмах май, Кронид Ефимович хăй те яра кунах хирти ĕçсемпе интереслленсе çӳрет. Çакă çитменлĕхсемпе кăлтăксене вăхăтра пĕтерме çул уçать.

Акă В. Соловьев тытса пыракан ДОН-1500 черетлĕ çаврăм туса килсе бункера тулнă тырăна пушатма чарчĕ. 3-мĕш вырмана водитель пулса хутшăнакан Андрей Пугачев тытса пыракан ЗиЛ-130 автомашина çавăнтах комбайнпа юнашар пырса тăчĕ.

– Тырă 5 тоннăна яхăн кĕрет те кузоври тырăна та бортран касса каясран кусармалла. Кунта вара шкул ачисем пысăк тĕкĕ параççĕ, – терĕ Андрей кузова улăхакан ачасем çине пăхса. Костя Валежников, Александрпа Димитрий Соловьевсем **(сăн ӳкерчĕкре)** йывăç кĕреçесемпе тырăна самантрах кузов айккисенелле сарчĕç.

Çĕнĕ тырăпа тулнă машине йĕтем еннелле тапранса кайрĕ. Çак вăхăтра А. Валежниковпа А. Толикин тытса пыракан ДОН-1500 бункер тулса кайни пирки кăшкăртса пĕлтерчĕ. Çартан таврăннă хыççăн пĕрремĕш вырмана хутшăнакан А. Степановăн ЗиЛ-130 автомашини ун еннелле хускалчĕ. Анăçран тухнă çумăр пĕлĕчĕсем тухăçалла шурĕç те шурĕç. Уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă куракан Кашмашсем вара пĕр çеккунт та ĕççĕр лармаççĕ. Çапла хĕрӳ тапхăр вăл вырма. Акă пĕрремĕш çумăр пĕрчисем тулă хирне ӳкрĕç...

«Свобода» хуçалăхăн вырмари тепĕр çĕнĕлĕхĕ вăл – мунча. Ирпе ĕçе таса килекен механизаторсемпе водительсем ĕç хыççăн та киле мунча кĕрсе тасалса каяççĕ. Çакă мар-и-ха хуçалăх ĕç пахалăхĕпе пĕрлех çын сывлăхĕшĕн те тăрăшни. Вунăмĕш çул çак ырă йăлапа усă кураççĕ Кашмашсемпе Çатракассисем вырма вăхăтĕнче.

– Хуçалăх пирĕн тасалăхпа сывлăх пирки шутлани пурсăмăра та активлăрах ĕçлеме хавхалантарать, – терĕ 22 сехет тĕлĕнче мунчаран тухнă Александр Толикин комбайнер чунĕ уçăлнине палăртса.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ:**
***Ĕнерхи кун тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 233 гектар çинче вырнă. Ку вăл мĕн пур лаптăкăн – 1,7 проценчĕ. Ĕçсем, тĕпрен илсен, йăлтах кĕрхи культурăсен пуссисенче пыраççĕ. Вырмана асăннă куна тыр-пул акса çитĕнтерекен 20 пĕрлешӳллĕ хуçалăхран 8-шĕ тухнă. Пуринчен те ытларах (100 гектар) «Ударник» хуçалăхра вырнă. Вырма ĕçĕсем çавăн пекех «Свобода», Ильич яч. хис., «Оринино», «Герой» хуçалăхсенче вăй илеççĕ. Вырмана тухнă хуçалăхсем пурĕ 687 тонна кĕрхи тулă çапса тĕшĕленĕ. Вăтам тухăç 28,9 центнерпа танлашать. Ку вăл пĕлтĕрхи çак тапхăрти кăтартуран 4,65 центнер ытларах.***







**Сăн ӳкерчĕксенче: вырма хастарĕсем (сулахайран сылтăмалла): А. Степанов водитель, юлашки çулсенче районта тăтăшах çĕнтерӳçĕ-комбайнерсем хушшинче пулнă В. Соловьев комбайнер, ăна пулăшакан В. Степанов, А. Толикинпа А. Валежников комбайнерсем, А.Н. Пугачев водитель; шкул ачисем те пулăшаççĕ хĕрӳ ĕç çире; васкас пулать, çумăр пĕлĕчĕсем хушшăн-хушшăн таса тӳпене хуплама пикенеççĕ.**

**РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран**

## Ĕçлĕ ушкăн Мăн Сĕнтĕрте пулнă

Июлĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 16-мĕшĕччен ятарлă ушкăнсем ял тăрăхĕсене граждансемпе тĕл пулма тухса çӳресси пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Унта районти социаллă хӳтлĕх пайĕн, социаллă пулăшу паракан центрăн, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн специалисчĕсем хутшăнаççĕ. Граждансене вĕсем социаллă пакетпа усă курассин, субсиди уйăрса парассин, ача-пăча пособийĕсем тӳлесе тăрассин, ветерансене çăмăллăхсем парассин ыйтăвĕсемпе йышăнаççĕ.

Графикпа килĕшӳллĕн черетлĕ тĕл пулу июлĕн 29-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче иртнĕ. Специалистсем граждансемпе тĕл пулнипе пĕрлех Турикасси, Уйкас, Мăн Хураçка ялĕсенче уйрăм çынсен килĕсенче те пулнă, пĕччен пурăнакан ватă çынсен пурнăç условийĕсемпе паллашнă.

Хыççăн вара районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тата социаллă пулăшу паракан центрăн ĕçченĕсем пухăннисене концерт кăтартнă.

## Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн

Çурлатринчи ялти клуб заведующийĕ Р.П. Аксендарова хăйĕн кулленхи ĕçĕнче сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пырассине тĕп вырăна хурать. Кунта тĕрлĕрен спорт секцийĕсем ĕçлеççĕ. Ачасем волейболла, футболла, шашка-шахматла выляççĕ, бокс тытăçăвĕсем ирттереççĕ, хĕр ачасем валли вара «Грация» клуб ĕçлет.

Çак кунсенче Çурлатрисен футбол команди Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Хураçкасен командипе туслă тĕл пулу ирттернĕ, 4:3 шутпа çĕнтерме пултарнă. Турай ял тăрăхĕн командипе тĕл пулу вара хуçисем çĕнтернипе вĕçленнĕ, Турайсем ăнăçлăрах выляна.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Поздравляем!**

## С успешным завершением учебы!



Поздравляем **ТЕРЕХИНА Олега Викторовича** с окончанием госуниверситета и получившего диплом с отличием по специальности «Прикладная информатика в экономике». Желаем счастья, здоровья, успехов в работе. Спасибо за учебу.

**С поздравлением: папа, мама, Вова, Ира, Саня, Аня, Саша, Оля, Даша Терехины.**

**Официально**

## В Приложениях к райгазете – решения Собрания депутатов

В Приложениях к районной газете от 2 августа 2008 года печатаются:

- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов № С-26/1 от 11 июня 2008 года «О муниципальной программе «Комплексное развитие систем коммунальной инфраструктуры Моргаушского района Чувашской Республики на 2008-2011 годы».

- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов № С-26/3 от 11 июня 2008 года «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.11.2007 года № С-22/3 «О районном бюджете Моргаушского района на 2008 год».

- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов № С-26/9 от 11 июня 2008 года «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 29.06.2007 года № С-19/1».

- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов № С-26/11 от 11 июня 2008 года «О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 15 февраля 2008 года № С-24/3 «О Прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Моргаушского района на 2008 год».

Данными документами можно ознакомиться в органах местного самоуправления.


**Çырăнтару – 2009**

## Çитес çул валли çырăнтараççĕ

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

***Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!***

**Райхаçат редакцийĕ.**